# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

69 (8835) № * Шăматкун, 2020 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 12-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Республикăра

## «Халăх участковăйне» суйлатпăр

Чăваш Енре «Халăх участковăйĕ – 2020» пĕтĕм Раççейри конкурсăн пĕрремĕш (район шайĕнчи) тапхăрĕ пуçланчĕ. Çапла май сентябрĕн 11-мĕшĕнчен «халăх участковăйĕшĕн» сасăлама юрать.

Йăлана кĕнĕ тăрăх, конкурс виçĕ тапхăрпа пулать. Пĕрремĕш тапхăр сентябрĕн 11 – 20-мĕшĕсенче районсенчи шалти ĕçсен пайĕсен сайчĕсенче сасăланипе иртет. Конкурсантсенчен чи нумай сасă пухнă участковăй республика шайне тухать. Чăваш Енре мала тухнă участковăй вара финала хутшăнать.

Сасăлама Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин интернет-сайтĕнче май пур. Сасăлама «Одноклассники», «ВКонтакте» е «Фейсбук» социаллă сетьсенче авторизаци туни кирлĕ. Хыççăн вара килĕшекен участковăйшăн сасăламалла кăна.

**Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин пресс-службы.**

## Кинофестиваль кĕркунне иртмелле

Шупашкарта сулсеренех çу уйăхĕнче иртекен

## Вырмара – çĕнĕ «хир карапĕпе»




Районта

## Тĕслĕх библиотека хута кайрĕ

Çак кунсенче Мăн Сĕнтĕрте савăнăçлă лару-тăрура çĕнĕ ăрури тĕслĕх библиотека уçнă. Мероприятие район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, республика культура министрĕн çумĕ Елена Чернова ытти яваплă ĕçчен хутшăннă.

Библиотекăн сăн-сăпатне çĕнетсе улăштарма кăна мар, унăн пĕлтерĕшĕпе вырăнне çĕнĕ шая çĕклеме «Культура» наци проекчĕ шайĕнче федераци укçине 5 млн тенкĕ уйрнă. Çавăн пекех район бюджетĕнчен те 700 пин тенкĕ уйăрса пулăшнă.

Районта юлашки çулсенче культура учрежденийĕсем çине чăннипех те пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ростислав Тимофеев каланă тăрăх, культура учрежденийĕсенче юсав ĕçĕсем ирттерме кăçал кăна тĕрлĕ шайри бюджетран 33 млн ытла тенкĕ уйăрнă. Çитес пилĕк çуллăхра вара районта çĕнĕ культура учрежденийĕсем те çĕкленĕç. Вăл шутра – район центрĕнче те.

**Хамăр инф.**